# Пушкин Шупашкар витӗр тухса кайни

1833 ҫулăн пуҫламӗшӗнче вырăссен аслă поэчӗ А. С. Пушкин „Пугачев историйӗпе“ ӗҫлеме тытăнать. Поэт ун валли материалсем тӗрлӗрен архивсенче тата Пугачев ӗҫне хăйсем курнă ҫынсем каласа панисем тăрăх пухнă. Ҫав произведени вара 1834 ҫулта пичетленсе тухать.

1833 ҫулхи февралӗн 7-мӗшӗнче Ҫар министрӗ пулнă Чернышевран поэт хăйне Пугачевăн следствиллӗ материалӗсемпе паллаштарма ыйтать. Пугачев пирки калама ҫук пуян материалсем тупнипе, Пушкин, Пугачев саманине кăтартакан историллӗ романне вăхăтлăха ҫырма пăрахсах, Пугачев ҫинчен историллӗ монографи ҫырма тытăнать. Ҫав ҫул, ҫуркуннех, виҫ-тăват уйăх хушшинче, архиври кирлӗ япаласене тӗплӗн пăхса тухса, Пушкин „Пугачев историйӗн“ пуҫламăш вариантне ҫырса хунă пулнă.



Ҫар министерствин тусанлă архивӗсемсӗр пуҫне, поэт таврари пурăнаҫран та Пугачев ҫинчен материалсем шыранă. Ăна ҫав утаманăн хир пек сарлака пултарулăхне пӗлме, унăн ӗҫӗсене хăйсем куҫӗпе курнă ҫынсен асаилӗвӗсем кирлӗ пулнă. Вӗсем урлă кăна „чунсăр документсене“ истори енӗпе тӗрӗс тӗпчеме май пулнă та. Халăх Пугачев ҫинчен мӗн шухăшласа калаҫнисене Пушкин тарăннăн пӗлме тăрăшнă. Ҫавăнпа та ӗнтӗ XVIII-мӗш ӗмӗрти хресчен вăрҫи епле иртнине, ҫапăҫу вырăнӗсене, хуласемпе крепоҫсене Пушкин хăй куҫӗпе курса пӗлме Атăл, Урал таврашнелле тухса ҫӳреме шут тытать. Ҫапла, августăн 17-мӗшӗнче, А. С. Пушкин Петербургран Мускава тухса каять те сентябрӗн 2-мӗшӗнче Чулхулана ҫитет. 1200 ҫухрăм хушши поэт лавпа килет. Чулхуларан Хусана тата Чӗмпӗре Атăл тăрăх та анма май пулнă, анчах пароходсем пулманнипе Атăл тăрăх баркассемпе кимӗсем ҫеҫ ҫӳренӗ. Вăл хуласене те Пушкин лавпа кай-